# КАНДИДАТЫ В ДЕПУТАТЫ ГОСУДАРСТВЕННОЙ ДУМЫ ФЕДЕРАЛЬНОГО СОБРАНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ ОТ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ЕДИНАЯ РОССИЯ



**ФЕДОРОВ**
**Николай Васильевич**
Президент
Чувашской Республики

# ЗА ЕДИНУЮ РОССИЮ! ЗА СИЛЬНУЮ ЧУВАШИЮ!



**КОСАЧЕВ**
**Константин Иосифович**
Председатель Комитета Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации по международным делам



**СЕМЕНОВ**
**Павел Владимирович**
Член Комитета Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации по делам Федерации и региональной политике



**ПЕТРОВ**
**Михаил Владимирович**
Председатель сельскохозяйственного производственного кооператива «Первомайск» Батыревского района



**БУДАРИН**
**Николай Михайлович**
Герой России, начальник сектора – сменный руководитель полетов ОАО «Ракетно-космическая корпорация «Энергия» им. С.П. Королева



**БОРИСОВ**
**Евгений Германович**
Герой России, заместитель председателя сельскохозяйственного производственного кооператива «Герой» Моргаушского района



**САМОЙЛОВА**
**Алла Владимировна**
Главный врач государственного учреждения здравоохранения «Президентский перинатальный центр»

## ГОЛОСУЙТЕ ☑ №10

Материал печатается на платной основе.


## Указа ăнлантарса пани

**Редакци республика Президенчĕн "Милицин участокри уполномоченнăйĕсен службине çирĕплетес енĕпе пурнăçламалли мерăсем çинчен" Указне ăнлантарса пама ЧР Президенчĕн Администрацийĕн Ертӳçинчен Энвер Аблякимовран ыйтрĕ:**

– Указăн тĕллевĕ ятĕнченех курăнать – шалти ĕçсен органĕсен тытăмĕн тĕп сыпăкĕсенчен пĕрне, милицин участокри уполномоченнăйĕсен службине, çирĕплетесси. Документпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн темиçе йышăну хатĕрлесе кăлармалла, вĕсем участковăйсен ĕç-хĕлне пахалăх енĕпе çĕнĕ шая çĕклеме, службăна оборудованипе тата автотранспортпа тивĕçтерме, ĕçре çĕнĕ технологисемпе тата меслетсемпе усă курма пулăшĕç.

Патшалăхпа обществăна милицин участокри уполномоченнăйĕсен ятсумĕ çĕкленсе пыни, вĕсен ĕç условийĕсемпе пурнăçĕ лайăхланни кирлĕ. Николай Васильевич Федоров чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче Милици кунне халалланă савăнăçлă пухура милицин участокри уполномоченнăйĕн должноçĕ сумлă пулмаллине палăртрĕ, çак ĕçе килес текенсем черете тăччăр.

Çĕнĕ çулсем, коммуникаци тытăмĕсем тата спорт комплексĕсем, Чăваш Енри клубсемпе библиотека учрежденийĕсене çĕнетни правăна пăсасран сыхланса тăвакан профилактика ĕçне тухăçлă пурнăçламалли майсем йĕркелеççĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн йышăнăвĕсем милицин участокри уполномоченнăйĕсене халăхпа, общество пĕрлешĕвĕсемпе, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлеме хистеççĕ. Çак мерăсен тĕллевĕ – Чăваш Енри хуласемпе ялсенче çынсен лăпкă пурнăçĕпе ĕç условийĕсене тивĕçтересси.

**Районти прокуратурăра**

## Налуксене вăхăтра тӳлемелле

Налук тӳлесси патшалăх умĕнче яваплăх шутланса тăрать. Анчах та ăна тӳлессинчен чылайăшĕ пăрăнма пикенет. Çакă вара саккуна пăсни пулать. Çапах та вĕсене налук инспекцийĕ те, прокуратура та куçран вĕçертмест.

Ку енĕпе тĕрĕслев ирттернĕ май вара уйăхсеренех çак организацисене парăмçăсен шутĕнче асăрхама пулать: "Чемеево", "Свобода", В.И. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем, "Агро-Урожай" ХАО, "Ручей" ООО, "МилГрад" ООО, "Мил-Трейд" ООО. Çак организацисен ертӳçисем яваплăха туймаççĕ тесе çирĕппĕнех палăртма пулать. Налук вăхăтра пухăнманни вара район аталанăвне те чарса пырать. Çапах та налука вăхăтра тӳлеме пурте тивĕç-çке.

Организацисенче бухгалтери ĕçне йĕркеленинче, операцисене пурнăçланă май законодательствăсене еплерех пăхăннинче ертӳçĕ тата тĕп бухгалтер яваплă. Çапла вара налук тӳлес тивĕçе туллин пурнăçламасан вĕсен явап тытма тивет.

**Д. ВИКТОРОВ,**
**прокурорăн аслă пулăшаканĕ.**

**Редакци почтинчен**

## Тăрăшуллă почтальонка

Салам сире, редакци ĕçченĕсем! Çырмасăр чăтаймарăм ырă кăмăллă почтальонка çинчен. Маттур пирĕн Ольга Васильевна Иванова. Яланах вăхăтра хаçат-журнал çитерсе парать. Ваттисемпе те, çамрăксемпе те кăмăллă пуплет. Район, республика, республика тулашĕнчи хаçат-журналсене вăхăтра çырăнтарать. Номерсем çухалмасăрах çитсе пыраççĕ. Çав хушăрах килте кирлĕ таварсене те çитерет пирĕн пата. Уншăн ватă пенсионерсем те, çамрăксем те хĕпĕртеççĕ. "Турă пулăштăрах сана пире хисеп тунăшăн", – теççĕ ăна ырă сунса.

**Ял çыннисем ыйтнипе**
**А. АНДРИЯНОВ.**

Чуманкасси ялĕ.